2022-2023-мӗш вӗренӳ ҫулӗ

Шкул шайӗнчи олимпиада

Чӑваш чӗлхипе литератури (Чӑваш шкулӗ)

11 класс

Ыйтусем

Олимпиада ирттермелли вӑхӑт – 120 минут

Кашни ыйтӑва тӗрӗс хуравласан чи нумаййи 50 балл пухма пулать

1.« ______ - чӑваш халӑхӗн сарӑ кайӑк пек ӑста юрӑҫи, авалхи несӗлсен сӑнарлӑ шухӑшлавне ХХ ӗмӗре илсе кӗнӗ ахун. Ӑна ахальтен мар казах акынӗпе Джамбул Джамбаевпа дагестан халӑхӗсен ашугӗпе Сулейман Стальскипе тан лартаҫҫӗ», - тесе каланӑ ҫак паллӑ ҫын пирки В.П.Станьял, литература тӗпчевҫи. Кам вӑл? Пӗрремӗш клеткӑна хушамачӗн малтанхи сас паллине ҫырӑр. *Тӗрӗс хуравшӑн – 5 балл.*

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|

2. *Ярко-зеленая травка, обходительный человек, скользкая дорога* – сӑмах майлашӑвӗсене чӑвашла куҫарӑр. Ӑлантаракан сӑмахӑн малтанхи сас паллине иккӗмӗш клеткӑна ҫырса хурӑр. *Тӗрӗс хуравшӑн – 6 балл.*

3 _________ пӗлмен Лариван . Сиксе юлнӑ сӑмаха тӗрӗс тупса палӑртӑр, пӗрремӗш сас паллине виҫҫӗмӗш клеткӑна ҫырса хурӑр. Фразеологизм пӗлтерӗшне ӑнлантарӑр. *Тӗрӗс хуравшӑн – 4 балл.*

4. *Евчӗ, егерь, ейу, еткерҫӗ.* Хӑшӗ ытлашши? Сӑлтавне ӑнлантарӑр. Сӑмахӑн пӗрремӗш сас паллине тӑваттӑмӗш клеткӑна ҫырса хурӑр. *Тӗрӗс хуравшӑн – 4 балл.*

5. 1-мӗш ыйтура панӑ йӗркесенче хӑш сӑмах хыҫҫӑн чарӑну палли сиктерсе хӑварнӑ? Сӑмахӑн юлашкинчен иккӗмӗш сас паллине пиллӗкмӗш клеткӑна ҫырӑр. Чарӑну палли лартнин сӑлтавне ӑнлантарӑр. *Сӑмахне тӗрӗс тупнӑшӑн - 3 балл, ӑнлантарнӑшӑн - 2 балл. Пӗтӗмпе - 5 балл.*

6. Я. Ухсайпа пӗр ялта ҫуралнӑ, вилӗмсӗр поэма ҫырса хӑварнӑ поэт кам вӑл? Мӗн ятлӑ ялта ҫуралнӑ вӗсем? Ӑҫта вырнаҫнӑ вӑл? Паллӑ ҫыравҫӑн хушамачӗн пӗрремӗш сас паллине улттӑмӗш клеткӑна ҫырса хурӑр. *Тӗрӗс хуравшӑн – 6 балл.*

7. Александр Кӑлканӑн мӗнле мулкач ҫинчен ҫырнӑ хайлавӗ пур? *Тӗрӗс хуравшӑн – 3 балл.*

8. Мӗн вӑл эпопея? *Тӗрӗс хуравшӑн – 4 балл.*

9. Ҫыравҫӑсен хайлавӗсене тӗрӗс шыраса тупӑр. *Тӗрӗс хуравшӑн – 8 балл.*

1.Авторсем: Никита Бичурин, Ҫеҫпӗл Мишши, Александр Артемьев, Петр Осипов

2.Хайлав ячӗсем: «Айтар», «Салампи», «Йывӑр шухӑшсем», «Байкал».

10. Хӑвӑр таврашра тухса тӑракан чӑвашла хаҫат ҫинчен ҫырса парӑр. Хаҫат редакторӗ пулнӑ пулсан эсир мӗнле ҫӗнӗлӗхсем кӗртнӗ пулӑттӑр? *Тулли хуравшӑн - 5 балл.*